**Республикăри семинар-канашлу**

# Уй-хир ĕçе чĕнет

Уй-хир ĕçе чĕнет. Çур акине тухиччен шутлă кунсем кăна юлчĕç. Çӳл тӳпери тăри те, ав, çавăн пиркиех систерет. Уй-хире тухса каяс умĕн Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх республикăри ял хуçалăх организацийĕсен ертӳçисене, ытти специалистсене çĕнĕ йышши технологипе паллаштарма йыхравларĕ. Хуçалăхăн машинăпа -трактор паркĕ çĕр çинче ĕçлемелли агрегатпа, тĕрлĕ техникăпа тулнă. Тĕрлĕ маркăллă тракторсене, ака-суха тумалли, удобрени хывмалли, вырăх-чĕрлĕх апачĕ янтăламалли комплексĕсене тата ыттисене те район тулашĕнчи хуçалăхсенчен, суту-илӳ компанийĕсенчен кӳрсе килнĕ. Кашниех хăйсем илсе килнĕ техникăпа тĕплĕн паллаштарчĕ, вăл е ку ĕçе пурнăçланă çĕрте усăллине, выгăнлине палăртрĕ. Агрегатсене туса кăларакан пĕрлешӳсем вара хуçалăхсемпе тачă çыхăнура ĕçлеме хатĕррине пĕлтерчĕç.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ, ял хуçалăх министрĕ М.В. Игнатьев çакăн йышши çĕнĕ техникăпа пурин те ĕçлеме тăрăшмаллине палăртрĕ: “Çакăнта илсе килнĕ агрегатсем шăпах энерги перекетлеме, тăкаксене чакарма, тухăçлăха ӳстерме май паракансем шутне кĕреççĕ. Çавăнпа та паянхи кун ял хуçалăх уйĕсем çак çĕнĕлĕхе ыйтаççĕ. Тухăçа ӳстересси вара вĕсемпе усă курнинчен тӳрремĕнех килет. Патшалăх паянхи кун ял хуçалăхĕ çине пысăк тимлĕх уйăрать. Çĕнĕ техника туянма кăçал республика бюджетĕнчен 201,3 миллион тенкĕ укçа уйăрнă. Апла пулсан сирĕн çавăнпа усă курма пĕлмелле”, – терĕ вăл.

Пухăннисене Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов район аталанăвĕпе паллаштарчĕ. Çур акине хатĕрленес ĕç епле пыни çинче чарăнчĕ, çĕнĕ технологисене алла илесси пирки палăртрĕ.

Семинар-канашлăвăн ĕçне ЧР ял хуçалăх министрĕн çумĕ А.И. Семенов тăсрĕ. Вăл республикăра çурхи ĕçе мĕнле хатĕрленни пирки, районсенче ку енĕпе еплерех лару-тăру пулнине палăртрĕ. Чылай районта вара элитăллă, кондициллĕ вăрлăх, сĕрмелли-çунтармалли материалсем çителĕксĕрри çинчен каларĕ. Ял хуçалăх техникине 70-80 процент майлă юсанă. Ку енĕпе те тимлĕрех пулмаллине асăнчĕ.

Çур акинче туса ирттермелли ĕçсем çинчен ӳсен-тăрана хӳтĕлекен станци ертӳçин çумĕ Н.А. Абашин, ЧР апат-çимĕç фончĕн ертӳçи Ю.Е. Федоров, “Агро-Инноваци” ертӳçи Н.И. Васильев каларĕç. Çавăн пекех Пăрачкав районĕнчи “Простор” чикĕллĕ яваплăхлă обществăн ертӳçин çумĕ Н.Н. Новиков, Етĕрне районĕнчи “Родина” хуçалăх ертӳçи В.И. Тимофеев, Патăрьел районĕнчи “Труд” хуçалăх ертӳçи Н.П. Михайлов хăйсен опычĕсемпе паллаштарчĕç. Энерги перекетлекен, тăкаксене чакарма, тухăçлăха ӳстерме май паракан техникăн ырă витĕмне палăртрĕç.

Семинар-канашлу Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра ирттерни ăнсăртран килнĕ пулăм мар. Ку хуçалăх ăнăçлă аталанаканнисен шутĕнче. Унăн ĕçĕ-хĕлĕпе хуçалăх ертӳçи И.В. Николаев паллаштарчĕ. Хуçалăх çуртрисене 600 гектара яхăн, 20 гектар выльăх кăшманĕ акма, 70 гектар çĕр улми лартма палăртать. Кĕрхи культурăсене 270 гектар çинче акса хăварнă. Пахалăхлă вăрлăха çителĕклĕ хатĕрленĕ. Çавăн пекех тулăн, урпан çĕнĕ сорчĕсене акма палăртаççĕ.

Хуçалăх машинăпа трактор паркне çĕнетесси çине пысăк тимлĕх уйăрать. Çулсеренех энерги перекетлеме, тăкаксене чакарма, тухăçлăха ӳстерме май паракан техника, агрегат туянать. Иртнĕ çул вара ХТЗ-17221-09, МТЗ-82 тракторсемпе ГАЗ-3307 автомашина, ЭО-2621 экскаватор, СЗУ-5,4 сеялка, акара усă курмалли АКП-4 комбинированнăй агрегатсем, “Енисей-1200” комбайнпа рулонлă пресс илсе техника базине пуянлатнă. Малтанхи çулсенче туяннă çĕнĕ техника тăкака чакарма, сĕрмелли-çунтармалли материала самай перекетлеме, тупăш туса илессине ӳстерме май панă. Çавăнпа та хуçалăх ертӳçи техника çине пысăк тимлĕх уйăрать.

Хуçалăх ура çинче çирĕп тăни, палăрмаллах аталанни чи малтанах ертӳçĕрен килет пулĕ. Ытти хуçалăхсенче кадрсем енĕпе йывăр лару-тăру пулсан, кунта вăл йывăрлăх сисĕнмест.

Кĕртекассинчи çĕнĕ технологиллĕ сысна фермине вара паян районти чылай хуçалăх ăмсанма пултарать. Мĕншĕн тесен ăна тупăшăн пысăк çăл куçĕ теме те пулать.

Малта пыракан хуçалăхсем çапла аталанса пыраççĕ. Хăшпĕр хуçалăх ертӳçисене малалла мар, каялла пăхаççĕ теме пулать. Çакăн пек шайри семинар-канашлăва та вĕсем хутшăнма вăхăт тупайман.

Семинар-канашлăвăн ĕçĕн иккĕмĕш пайĕ районти ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисене, тĕп агрономсене, тĕп зоотехниксене пуçтарчĕ. Канашлăва район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов ертсе пычĕ.

Чи малтанах районти ял хуçалăх управленийĕн тĕп агрономĕ А.И. Павлов тухса калаçрĕ. Çурхи пысăк ĕçе хуçалăхсем мĕнле хатĕрленни çинче тĕплĕ чарăнчĕ. Хăш-пĕр хуçалăх пӳлмисене элитăллă вăрлăх, минераллă удобрени, сĕрмелли-çунтармалли материалсем кирлĕ чухлĕ илсе çитереймен-ха. Районта пĕтĕмпе 30 процент кăна кĕрхи суха туса хăварни халĕ ытларах ĕçлеме, палăртса хунă ĕçе кĕске вăхăтра пурнăçлама хистĕ. Акă, Ленин ячĕпе хисепленекен хуçалăх канашлу кунĕ тĕлне 17 процент кăна вăрлăх хатĕрленĕ. Çавăн пекех ытти хуçалăхсенче те йывăр лару-тăру. Пĕрисем анчах тапранаççĕ пулсан, теприсем çур акине хатĕрленсе çитнĕпе пĕрех. Уй-хире тухма кăна кĕтеççĕ тейĕн. Кунта уйрăмах Ильич ячĕпе хисепленекен тата “Герой” хуçалăхсене ырă енчен асăнса хăвармалла. Ильич яч. хис. хуçалăх агрономĕ çур аки ирттерме кондициллĕ вăрлăха 100 процент, минераллă удобрение 96 тонна янтăланине палăртрĕ. Малта пыракан хуçалăхсем техникăна, агрегата юсаса, çĕнетсе çитернĕ пулсан, çур акие кĕтмен хуçалăхсенче вара тин çеç хулăн юртан тасалаççĕ-ха.

Канашлăвăн ĕçне малалла ял хуçалăх управленийĕн тĕп зоотехникĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.А. Алексеева тăсрĕ.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ республикăра лайăххисен шутĕнче. Сĕт туса илесси уйрăмах Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра çӳллĕ шайра. Выльăх апатне кӳршĕ хуçалăхран илсе килеççĕ пулин те, продукци туса илесси пысăк. Кулленхи сăвăм пĕр ĕне пуçне 16 килогрампа танлашать. Çав хушăрах “Передовик”, “Лидер”, “Рассвет” хуçалăхсенчи сăвăм самай сахал. Выльăх-чĕрлĕхшĕн йывăр тапхăр пырать теме те пулать. Янтăланă апат чылай хуçалăхра пĕтнĕпе пĕрех. Çавăнпа та хăш хуçалăхпа килĕшӳ тунă, çавăнтан турттараççĕ. Çав хушăрах “Передовик” хуçалăхра уйрăмах пур енĕпе те йывăр лару-тăру пулнине палăртрĕ вăл.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**








**Сăн ӳкерчĕксенче: энерги перекетлеме май паракан агрегатсемпе паллашнă самант; Ильич яч. хис. хуçалăх туяннă çĕнĕ йышши ХТЗ-17221-09 трактор; çур акине туса ирттермелли ĕçре сĕнӳсем выранлă пулĕç.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**Ача çулталăкĕ**

# Сăпайлă, хаваслă, пултарулă




Кашни ача амăшне тĕнчере чи хитри, чи лайăххи тесе юратать. Кашни амăшĕ те хăй ачине пур ачаран та лайăххи тесе шутлать. Çĕр çинче хĕрарăмăн пысăк тĕллевĕ вăл – ачасем сывă та телейлĕ пуласси. Çавăнпа та кашни амăшĕ пепкине мĕн пĕчĕкрен юратса, тĕкĕ пулса пырать. Кăçалтан вара патшалăх та пĕчĕк пепкесемшĕн сисĕнмеллех пулăшу пама пуçларĕ. Çакна туйса та пулĕ Москакасси ял тăрăхне “çĕнĕ кайăксем” нумайрах та нумайрах вĕçсе килме пуçларĕç. Çулталăк пуçланнăранпа 7 кил ача сассипе тулчĕ.

Çак савăнăçлă пулăмсене Москакасси ял тăрăхĕнчи культура ĕçченĕсем паллă тума шутларĕç. Хальхинче вĕсем аннесен ячĕпех “Ай-хай, çамрăк аннесем” конкурса ирттерес терĕç.

Асăннă кун Москакасси Культура çурчĕ ялти халăхпа тулса ларчĕ. Халиччен кун пек уяв пулман-ха ку тăрăхра. Культура çурчĕн директорĕ Г.Г. Голубева тĕплĕн хатĕрленни курăнать. Ялти библиотекарь Р.И. Сибякова та айккинче тăрса юлмарĕ. Уява садик воспитательници П.Г. Лебедева ертсе пычĕ.

Мĕнле конкурс кăна хатĕрлемен пуль çамрăк аннесем валли: хаçат кăларасси, хăйсемпе паллаштарасси, ташласа юрласси, ал ĕçĕсемпе паллаштарасси тата темтепĕр.

Юлашкинчен сумлă жюри конкурс результачĕсемпе паллаштарчĕ: чи сăпайлă анне – Ольга Киршева, чи хаваслă анне – Наталия Смирнова, “ылтăн алăллă” анне” – Олеся Поркина, чи пултаруллă анне – Надежда Волкова.

Çакна палăртса хăварма та кăмăллă: аннесем пурте аслă пĕлӳллĕ педагог профессине илнĕскерсем. Уяв пурне те килĕшрĕ.

Халĕ культура ĕçченĕсем кун пек уявсем ирттерес пирки тата тĕрлĕрен плансем тăваççĕ.

**Р. СИБЯКОВА,**
**Москакасси ял библиотекарĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: конкурса хутшăннă çамрăк амăшĕсем.**

# Тунсăхлама вăхăт çук



Шкул çулне çитмен ачасен сывлăхне упраса çирĕплетесси, вĕсене физкультурăпа яланлăхах туслаштарасси – пирĕн тивĕç. Çавăнпа та эпир физкультурăпа сывлăха çирĕплетес ĕçе тĕрĕс йĕркелеме тăрăшатпăр. Ачасен тĕрлĕ ĕçне активлă канупа ылмаштарса пыратпăр. Çапла туни вĕсене тĕрлĕ енлĕ аталаннă çынсем пулма май парать.

Кварталта пĕрре эпир сывлăх эрнине йĕркелетпĕр. Тĕрлĕ вăйăсем, ăмăртусем ирттеретпĕр.

Походсене çӳреме те юрататпăр эпир. Çуркунне Атапай вăрманне çул тытатпăр. Çĕньял пĕвине, Муркаш юхан шывне çитсе куратпăр. Хĕлле вара йĕлтĕрпе уçăлма тухатпăр. Походсене çӳресе ачасем сывлăхне те çирĕплетеççĕ, тавра курăмне те ӳстереççĕ.

Ашшĕ-амăшĕсем хутшăннипе “Анне, аттте, эпĕ – спорт çемйи” конкурс ирттересси те йăлана кĕчĕ. Кăçал эпир ăна виççĕмĕш хут йĕркелерĕмĕр. Пĕтĕмпе 7 команда хутшăнчĕ. Ăмăртупа пурте кăмăллă пулчĕç. Хыççăн пурте пĕрле чей ĕçрĕмĕр. Ашшĕ-амăшĕпе юнашар пулни ачасене уйрăмах савăнтарать. Аслисене те хăйсен пепкисем çине тимлĕрех пăхма хистет.

Апрель уйăхĕнче эпир пĕрремĕш класра вĕренекенсемпе тĕл пулса спорт ăмăртăвĕ ирттерме шутлатпăр.

**О. ПРОКОПЬЕВА,**
**“Хĕвел” ача садĕнчи воспитатель.**

**Сăн ӳкерчĕкре: ачасем – походра.**

**Суту-илӳ ыйтăвĕсемпе**

# Людмила Гаврилова çĕнтерчĕ

Çулсеренех “Районти чи лайăх сутуçă” конкурс иртет. Çакă суту-илӳ ĕçне алла илнисен професси тĕлĕшĕнчи ăсталăхне ӳстерме май парать. Унта Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен тата уйрăм çынсен “Ступень-Муркаш”, “Визит” магазинĕсенчи сутуçăсем хутшăнчĕç. Кăçал вăл икĕ тапхăрпа пулчĕ.

Чи малтанах асăннă конкурса ирттерме йĕркеленĕ ятарлă комисси членĕсем вĕсем ĕçлекен вырăна тухса, унти лару-тăрăва тишкерсе хак пачĕç, сутуçăсем тавар туянакансемпе епле ĕçленине сăнарĕç. Конкурсăн 2-мĕш тапхăрĕнче вара унта хутшăнакансен пĕлĕвĕпе практикине вĕсен ĕçĕпе çыхăннă тĕрлĕ ыйтусемпе тĕрĕслерĕç.

“Районти чи лайăх сутуçă” ята вара Мăн Сĕнтĕр райповĕн апат-çимĕç магазинĕн сутуçи Л. И. Гаврилова тивĕçрĕ. Ăна 1 степень дипломпа, парнепе чысларĕç. Хыççăнхи сумлă вырăнсене вара Муркаш райповĕн хуçалăх таварĕсем сутмалла магазинти И. В. Гаврилова тата Л. В. Николаевăн “Визит” суту-илӳ çурчĕн сутуçи А. В. Голубева йышăнчĕç. Конкурса хутшăннă тепĕр 3 сутуçă тĕрлĕ номинацисен çĕнтерӳçисем пулса тăчĕç. “Чи лайăх суту-илӳ предприятийĕ” ята Калмăкри магазин Р.А. Васильева сутуçă тăрăшулăхĕпе илчĕ, “Ступень-Муркашри” Е.В. Потапова профессионализмпа пултарулăх енчен чи маттурри пулчĕ. “Визитри” З. А. Михайлова – “Суту-илӳ” ветеранĕ” номинаци çĕнтерӳçи.

Район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ Э.И. Симакова пĕлтернĕ тăрăх, çакнашкал ăмăртусем малалла та пулаççĕ. Пĕтĕмĕшле вара пирĕн районти кооператорсем малтанхи çулсенче çĕнсе илнĕ чикĕсенчен чакмаççĕ. Республикăра çеç мар, Раççейри ĕçтешĕсенчен те малта пыраççĕ. Кăçалхи 2 уйăхра районти суту-илӳ ĕçченĕсем 60 миллиона яхăн тенкĕлĕх тавар сутнă. Ку вăл пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен 30 процентран та пысăк кăтарту.

# Çĕнĕ магазинсем уçăлаççĕ

Районта çавăн пекех çĕнĕ суту-илӳ предприятийĕсем те уçăлаççĕ. Кĕçнерни кун, акă, Шетмĕпуçĕнче А.А. Петров уйрăм предпринимателĕн “Шетмĕ” магазинĕ уçăлчĕ. Çакă ял çыннисемшĕн чăн-чăн уяв пулчĕ. Халĕ, ав, çу кунĕсем те çывхарса килеççĕ. Ялти çыннăн тепĕр чухне магазина кайма та вăхăт çитмест. Çывăхрах магазин пулни вара çав тери меллĕ. Апрель уйăхĕн пуçламăшĕнче Муркашри универмагра та самообслуживани йĕркипе ĕçлекен магазин уçăлмалла.

**Л. ПАВЛОВА.**